(cc) BY


***Матьянова Ираида Васильевна***
учитель
БОУ «Чебоксарская общеобразовательная школа для обучающихся с ОВЗ №2» Минобразования Чувашии
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# МЕТОДЫ ПРЕПОДАВАНИЯ РОДНОЙ ЛИТЕРАТУРЫ

***Аннотация**: в статье рассматривается приемы использования технологии критического мышления на уроках родной (чувашской) литературы в поликультурных условиях. Статья адресована широкому кругу педагогов, заинтересованных в оптимизации современного учебного процесса.*

***Ключевые слова**: технологическая карта «нового слова», «пирамидный» прием, скрайбинг.*

***Аннотаци**: статьяра тăван (чăваш) литература урокĕсенче критикăллă шухăшлав технологийĕн ăслайĕсемпе усă курас мелсене пăхса тухнă. Ку ăслайсем ачана çĕнĕ пĕлӳ «тупма», вĕрентӳ ĕçне тухăçлăрах тума пулăшнине ĕнентернĕ.*

***Тĕп сăмахсем**: «Çĕнĕ сăмах» технологи картти, пирамида ăслайĕ, скрайбинг.*

Тăван çĕр-шыв, тăван кĕтес, тăван кил, тăван анне… Мĕн вăл Тăван çĕр-шыв? Словарьте çын çуралса ӳснĕ çĕр-шыва Тăван çĕр-шыв теççĕ, апла пулсассăн, пирĕн Тăван çĕр-шыв вăл – Чăваш Республики. 2019 çул тĕлне 1 223 395 çыншăн Чăваш Республики – Тăван çĕр-шыв. Мĕн вăл тăван кĕтес? Тăван кĕтес вăл – ачалăх иртнĕ, çын тĕпленсе пурăнакан вырăн. Тăван кĕтессĕр çын çук!!! Çут çанталăк кашни çыннах киллĕ пулма пилленĕ. Тăван килте тăван атте-анне, тăван аппа-пичче, тăван «сывлăш», тăван сăмах…Атте …Анне… Шел… сăнчăр таçта татăлса кайрĕ. Тăван çĕр-шывĕ те, тăван кĕтесĕ те, тăван килĕ те пур, темшĕн *атте, анне* сăмахсем çеç çук. Эпир, чăвашсем, çука хăнăхман!!! Çавăнпа чун ыратать. Пирĕн çук-и савăнмаллăх юрă-ташă, çук-и пирĕн мухтанмаллăх капăр тĕрĕ, тĕнче шайне тухнă поэтсем, уçлăха та парăнтарнă чăвашсем… Шкул


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

ачисене ҫакна мӗнле ӗнентерес, мӗнле ӑнлантарас? Эпӗ вӗсен тӑван амӑшӗ марҫке тӑван сӑмаха калама вӗрентме… Хӑй ҫинчен калама 4–5 предложени вӗрентӗп-ха, 4–5 предложени – хула ҫинчен… Вӑл мӗн парать?

Кирек мӗнле тӑван чӗлхене те парта хушшинче ларса вӗренеймен те, вӗренеймӗҫ те. Тӑван сӑмах ачапа пӗрле сӑпкара сикмесен тӑван чӗлхемӗр упранса юлӗ-ши? Мӗн тӑвас тейӗн, пирӗн шкул ачисен, нумайӑшӗн, килӗсенче тӑван сӑмахӑн сӑпки чӑланта ҫакӑнса тӑрать пулсассӑн, тӑван чӗлхепе тӑван литература вӗрентекенӗсен ҫав сӑпкана шкулта ҫакма тивет. Ҫавӑнпа та, *пӗрремӗш* «вӑрттӑнлӑх» вӑл – ашшӗ-амӑшӗпе ӗҫлени. Пирӗн ачасен ашшӗ-амӑшӗсем те айӑплӑ мар, пурте педагогика университетне пӗтермен-ҫке вӗсем, пӗлменнипе кӑна йӑнӑшаҫҫӗ. Кашни класа, пухӑва ҫитсе, хампа паллаштаратӑп, тепӗр чӗлхе ачана пулӑшу кӑна панине ӑнлантаратӑп, уроксем мӗнле иртнине каласа паратӑп, ачисемпе килте май пур таран чӑвашла калаҫма ыйтатӑп. Тӗрӗссипе каласассӑн, ашшӗ-амӑшӗсенчен 50% ачисене чӑвашла вӗрентесшӗн, анчах мӗнле вӗрентмеллине пӗлмеҫҫӗ. Паянхи пурнӑҫра вырӑс чӗлхи те, акӑлчан чӗлхи те кирлӗ – эпӗ килӗшетӗп. Ҫав хушӑрах тӑван чӗлхене мӗнле вӗрентмелле? Пирӗн мӗн пӗчӗкрен икӗ чӗлхе алла илме май пур! Хамӑн ачасене икӗ чӗлхене мӗнле хӑнӑхтарнӑ опытпа паллаштаратӑп.

*Иккӗмӗшӗнчен*, ҫакна ӑнлантӑм, ачана чӗлхепе интереслентерсе яма халӑхӑн историпе культурине кӑсӑклӑн каласа пама пӗлмелле. Халӑхпа халӑх хушшинчи ҫыхӑнӑва, уйрӑмлӑхсене палӑртса хӑвармалла [3]. Ачана халӑхӑн историйӗпе кльтури кӑсӑклантарчӗ пулсассӑн, вӑл чӗлхерен те ютшӑнмӗ. Ҫавӑнпа лингвокультурологи ҫине таянса вӗрентни питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ [2].

*Виҫҫӗмӗшӗнчен*, тӑван халӑхӑн ылтӑн арчара упранакан литературипе паллаштармалла. Пултӑрах, хӑшӗ-пӗрне вырӑсла вулар, чи кирли – вӑл хайлавсем чӑваш чунӗллӗ. Шӑпах чӑваш писателӗсемпе поэчӗсен хайлавӗсем пур предмет результачӗсене те пурнӑҫлама май параҫҫӗ.

Урок интереслӗ те тухӑҫлӑ пултӑр тесе тӗрлӗ мелсемпе меслетсем шырамалла. Эпӗ, чӗлхе кӑлтӑкӗсене тӳрлетмелли шкулта ӗҫленӗрен, ытларах Сӑмахпа ӗҫлетӗп, урокра кашни ачана аталанма пулӑшакан меслетсем шыратӑп.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Фишбоун, кластер, лэпбук, сиквейн меслечĕсемпе усă курнă чухне ачасене сăлтавĕсене тупма, пĕтĕмлетӳ тума вĕрентетĕп. Вĕренекенсене текста тĕрлĕ интонаципе, хăвăртлăхпа, кăмăлпа (савăнăçлă/хурлăхлă, хăвăрт/майĕпен, шăп/сасăпа) калаттаратăп.

Уроксенче критикăллă шухăшлав технологин ăслайĕсемпе усă куратăп. Кун йышши уроксем шырав мелĕсемпе йĕркеленеççĕ. Ачасем ĕç çинчен йĕркипе каласа пама, хăйсен шухăшне палăртма вĕренеççĕ. Критикăллă шухăшлав мелĕпе усă курни вĕсене çĕнĕ пĕлӳ тупма пулăшать. Пĕлӳ шырас ĕçе план тăрăх туса пыма, литература хайлавĕсене юратма хăнăхтарать.

Сăмахран, çĕнĕ сăмахăн технологи карттине çырнă чухне, çĕнĕ сăмаха лайăххрах ас туса юлаççĕ. Çĕнĕ сăмах, сăмахăн синонимĕ, антонимĕ, çыхăну (ассоциаци), тепĕр сăмах форми, текстри предложени, ачан предложенийĕ.




Ку ĕç кĕске проект евĕрлĕ пулса тухать.

Эпĕ усă куракан тепĕр ăслай – Пирамида. Вăл ачасен шухăшне, текстăн содержанине çирĕплетме пулăшать. Ку ăслайпа библиотекарьсем кĕнекене хак панă чухне е кĕнеке рецензине çырнă чухне усă кураççĕ. Эпĕ унпа урокра та усă курма вырăнлă тесе шутлатăп, шăпах литература урокĕсенче текста вуласа тухнă хыççăн çак ăслайпа усă курса содержани тăрăх текст çырма меллĕ.

Пирамида ăслайĕпе усă курса ирттерес уроксем çакăн пекрех йĕркеленеççĕ:

– текстпа паллашни (пĕрле те харпăр хăй тĕллĕн те паллашма пулать);

– ыйтусем çине хуравласа пирамида йĕркелени;


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

– кашни йĕркине хушса çырни;

– тулли текста çырни.

Пирамида сакăр картлашкаран тăрать. Хайлавпа паллашнă хыççăн ачасем вăл мĕн çинчен пулнине пĕр сăмахпа калаççĕ, çӳлти пĕрремĕш картлашка çине çырса хураççĕ.

Иккĕмĕш картлашка çине хайлав мĕнле туйăм çуратнине икĕ сăмахпа çырса хураççĕ.

Виççĕмĕш картлашка – текстри пулăмăн вырăнĕ тата вăхăчĕ (виçĕ сăмах).

Тăваттăмĕш картлашка – текстри тăватă тĕп пулăм.

Пиллĕкмĕш – тĕп сăнарсем тата вĕсен уйрăмлăхĕсем (пилĕк сăмах).

Улттăмĕш – текста вуланă май çуралнă туйăм (пуçламăшĕнче, варринче, вĕçĕнче).

Çиччĕмĕш – пĕрремĕш йĕркенех хушса çичĕ сăмахпа çырмалла.

Саккăрмĕш картлашка – сакăр сăмахпа хайлава реклама тумалла е хăйсен шухăшне (мĕнле кăмăл-туйăм çуратнине) çырмалла.




Çак ĕçе пурнăçланă хыççăн, пирамидăпа усă курса текст çыраççĕ. Çак ăслайăн пахалăхĕ – ачасен шухăшлавне, тимлĕхне, калаçăвне, çырăвне, вулавне аталантарнинче, пĕлĕве йĕркене кĕртме (системăлама) пулăшнинче.

Кун йышши ĕçсене ача чăвашла пĕлмесĕр пурнăçлайманнине йышăнмалла. Çавăнпа та, хулари шкулта ĕçленĕ май, чăваш поэчĕсен, писателĕсен хайлавĕсемпе вырăсла та ĕçлеме тивет.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Вĕрентекен умĕнчи чи пĕрремĕш тĕллев вăл – ачасем патне информаци çитересси, ас туса юлтарасси, ăша хывтарасси. Кашни çыннах информацие итлесе, тытса пăхса, куçпа курса, тутанса пăхса, тата шăршласа илет. Учĕнăйсем палăртнă тăрăх, çын алăпа тытса пăхса пĕтĕм информацин 1% илме пултарать, тутанса пăхса та çавăн чухлех, сăмса 2% информаци парать теççĕ, итлесе информацин 16% ăша хыватпăр, пăхса, курса вара – 80%. Паллах, эпир, вĕрентекенсем, 80% информацине илмелли теехнологисем шыратпăр та. Çавăн пек технологисен шутне Скрайбинг технологине кĕртес килет. Скрайбинг шăпах та критикăлла шухăшлава аталантарать. Скрайбинг «scribe» сăмахран пулса кайнă (çырас, паллă тăвас тенине пĕлтерет). Эндрю Парком ӳнерçĕ шутласа тупнă çак меслете презентаци технологийĕн çĕнĕ мелĕ тесен те юрать.

Скрайбинга компьютерпа ӳкермелли программăсене усă курса тума пулать тата алă вĕççĕн. Алăпа тăвас скрайбинг та тĕрлĕрен пулать: ӳкерсе, çыпăçтарса (аппликаци), пластилинпа, тăмпа, çăмпа усă курса, фланелеграфи тата ытти мелсемпе те усă курма пулать.




Кун пек ĕçсем шкул ачисене кăмăлне каяççĕ-ха, тăван литература урокĕсене килĕштернине уççăнах калаççĕ-ха... Çапла майпа вĕрентӳ вăрттăнлăхĕсене тупрăм пуль терĕм! Çук! Паянхи кун, шел пулин те, тăван сăмах вĕрентекен сăпкинчех выртса юлать. Çапах та эпир, вĕрентекенсем, вĕçĕмсĕрех шыравра... Çĕннине шыратпăр, тупатпăр, ĕçре усă куратпăр, ачасене тăван чĕлхемĕрпе кăсăклантарас тесе тăрăшатпăр, вăхăт çиртсен вĕсем тăван сăмах выртакан сăпкана хаваспах сиктерессе шанса ĕçлетпĕр.



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

***Список литературы***

1. Громова О.К. «Пирамидная история», или Как вызвать интерес к письму: мастер-класс / О.К. Громова // Библиотека в школе. – М. – 21 с.

2. Егорова А.С. Чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса вĕрентесси / А.С. Егорова // Проектирование механизмов реализации образовательных инициатив: материалы I Всерос. научн.метод. конф. (Чебоксары, 22 августа 2017 г.) / редкол.: Ж.В. Мурзина, Г.В. Николаева, С.П. Руссков. – Чебоксары: ООО «Издательский дом «Среда», 2017. – С. 72–74.

3. Исаев Ю.Н. Фитонимический концептуарий как словарь нового типа (на материалах чувашского и русского языков): монография / Ю.Н. Исаев; науч. ред. В.И. Сергеев. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2013. – 191 с.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)